**Кам йăранĕ çумланман?**

Пĕр йăранĕ çумланман.
Тавлашаççĕ ик тăван —
Петĕрпе лутра Иван:
— Кам йăранĕ тасалман?

Вăхатра вăй хумасан
Çарăкне хăçан куран?
Хирĕçет лутра Иван:
— Манăн мар йăран ку, сан.
Ав епле хитре сухан
Курăкне çăлса таксан.

Айкашаççĕ кун каçа
Пĕр-пĕрне вăрçа-вăрçа.
— Эп çумларăм çырлана,
Çак йăран тивет çана,
— Петĕр хăйĕнне перет, —
Кам-ха шыв нумай çĕклет?

Ир пулать те каç, пулать,
Курăк йăрана хуплать.

Петĕрпе лутра Иван
Килĕшрĕç аран-аран:
— Уйăрар та çурмаран
Тытăнар ĕçе ыран.
Эх, çумлаçчĕ паянах,
Çук, хăварчĕç ырана.
Çумăр çурĕ каçхине,

Кĕме çук йăран çине.

Çап-çара мăян ӳсет,

Эх, пахча епле тӳсет?

Ир пулать те каç пулать,

Кашлаçа йăран ларать.

Пĕр эрне хыçра, тепри...

Çисĕнмерĕ те иртни.

Петĕрпе лутра Иван

Çарăк тутанса курман.

*Борлен,Б. Кам йăранĕ çумланман : [сăвă] / Б. Борлен // Чăваш литературин антологийĕ. — Шупашкар, 2015. — [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. — С. 267.*